# ЛИТЕРАТУРОВЕДЕНИПЕ ФОЛЬКЛОРИСТИКА КАҪАЛӐКӖСЕНЧЕ
## (Н. Г. Ефремова-Ильина 50 ҫул тултарнӑ май)

# НА ПОПРИЩАХ ЛИТЕРАТУРОВЕДЕНИЯ И ФОЛЬКЛОРИСТИКИ
## (к 50-летию Н. Г. Ефремовой-Ильиной)

# IN THE FIELDS OF LITERATURE AND FOLKLORE STUDIES
## (on the 50th anniversary of N. G. Efremova-Ilyina)

2026 ç. кăрлачăн 19-мĕшĕнче филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх аслă ĕçтешĕ, Раççей писателĕсен союзĕн членĕ Надежда Геннадьевна Ефремова-Ильина хăйĕн 50 çулхи юбилейне паллă турĕ. Вăл Чăваш АССРĕн Вăрнар районĕнчи Мăн Элмен ялĕнче çуралнă. 1993 ç. Ярмушкăри вăтам шкул пĕтерсен И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи Чăваш филологийĕпе культура факультетне вĕренме кĕнĕ. Ку вĕренӳ заведенине 1998 ç. хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ хыççăн аспирантурăна кусăн вĕренме кĕнĕ. Диссертаци çырнă маях тăван факультетра студентсене пилĕк çул вĕрентнĕ. 2022 ç. ăслăлăх диссертацине ăнăçлă хӳтĕлесе филологи наукисен кандидачĕн степеньне илнĕ.

Надежда Ефремова-Ильина малтанхи хайлавĕсене университетра вĕреннĕ вăхăтрах çырма пуçланă, вĕсем «Ытлари» альманахра тухнă. Унтан «Ялав» журналта «Хĕр Кĕлетки», «Шăранса та пĕтми…», «Даниил», «Турăсăр тупнă телей» т. ыт. калавĕсем пичетленсе пынă. Çавăн пекех çыравçăн илемлĕ произведенийĕсем «Шурă туй кĕпи» (2004), «Чăваш антологийĕн прози» (2003), «Дети леса» (2016. Т. 1), «Чувашский рассказ» (2016) тата ытти кĕнекесенче кун çути курнă, Мускавра «Литература народов Российской Федерации» (2018) проза антологийĕнче пичетленнĕ. Н. Г. Ефремова-Ильина хайлавĕсем хăйне евĕрлĕ стильпе палăрса тăраççĕ. Вĕсем тарăн шухăшлă, чĕлхи сăнарлă та сĕтеклĕ. Вăл хăйĕн произведенийĕсенче çын чунне тарăн уçса парассине, пурнăç çине философилле куçпа пăхассине малти вырăна хурать.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче Н. Г. Ефремова-Ильина 2003 ç. ĕçлеме тытăннă: 2018 çултан пуçласа филологи енĕн фольклор секцийĕн ăслăлăх аслă ĕçтешĕ пулса тăрăшать. Ăслăлăхри паллăрах тĕпчевĕсенчен «Чăваш лирики (1960 — 1990 çулсем) (2013) монографие асăнмалла. Чăвашсен пултаруллă поэчĕ Иван Ивник çĕр çул тултарнă тĕле унăн сăввисене архивра пĕрчĕн-пĕрчĕн шыраса тупса кĕнеке пухса кăларнă, ум сăмахне те çырнă (2014). Çавăн пекех «История чувашской литературы XX в. Часть I (1900 — 1955 годы)», «История чувашской литературы XX в. Часть II (1956 — 2000 годы)» (2015, 2017) коллективлă монографисен авторĕсенчен пĕри шутланать.

Чăваш лирикисĕр пуçне Н. Г. Ефремова-Ильина тăван сăмахлăха (уйрăмах чăваш халăх юмахĕсене, шӳчĕсене, рекрут юррисене, эпикăлла поэзине) тĕпчес тĕлĕшĕнчен нумай вăй хурать. Вăл тăрăшнипе паянхи кун «Январ юмахĕсем» (2011), «Нараста юмахĕсем» (2012), икĕ кĕнекерен тăракан «Паттăр юмахĕсем» (2019, 2020) кун çути курнă. Н. Г. Ефремова-Ильина — ку кĕнекесене пухса хатĕрлекенĕ, текстсене чăвашларан вырăсла куçаракан, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ. Чăваш юмахĕсенче тĕпчевçĕ чи авалхи мифологилле сийсене тупса палăртать: çиелтен пăхсан ансат кăна сюжетсенче фетишизм, эндогами, экзогами, анимизм, тотемизм йĕрĕсем упранса юлнине ĕнентерет. Н. Г. Ефремова-Ильина 50 ытла наука статйи пичетлесе кăларнă.

Ăслăлăхри çитĕнĕвĕсемшĕн Н. Г. Ефремова-Ильина Чăваш Республикин çамрăксен патшалăх премине (2004), Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин хисеп грамотине (2015), Гуманитари ăслăлăхĕсем енĕпе Чăваш Республикин Патшалăх премине (2018), Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн хисеп грамотине (2020) илме тивĕç пулнă.

О. Н. МИХАЙЛОВА,
научный сотрудник ЧГИГН

**Основные труды Н. Г. Ефремовой-Ильиной**

Эпоха «оттепели» и отход от канонов соцреализма (1956 — 1969). Поэзия // История чувашской литературы XX века. Часть II (1956 — 2000 годы): коллективная монография. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2017. С. 74 — 101.

Период поиска новых литературных направлений и жанрово-стилевых открытий (1970 — середина 1980-х гг.). Поэзия // История чувашской литературы XX века. Часть II (1956 — 2000 годы): коллективная монография. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2017. С. 215 — 249.

Отражение народной культуры в чувашских и марийских сказках // Чуваши и марийцы — соседи по «общему дому»: материалы Межрегиональной научно-практической конференции (Большой Сундырь, Кулаково, 17 мая 2019 г.) / сост. и отв. ред. Г. А. Николаев; МарНИИЯЛИ. Чебоксары: ЧГИГН, 2019. С. 332 — 337.

Сатира и юмор в устном народном творчестве чувашей и татар (на примере народных сказок и шуток) // Татары и чуваши — ветви одного древа: материалы Всероссийской научно-практической конференции / сост. и отв. ред. Г. А. Николаев. Казань; Чебоксары: Новое Время, 2021. С. 352 — 360.

Проблема дифференциации сатирических сказок и анекдотов в чувашском фольклоре // Традиционный и современный фольклор народов Волго-Уралья: материалы Межрегиональной научно-практической конференции, посвященной 100-летию фольклориста И. И. Одюкова. Чебоксары: ЧГИГН, 2024. С. 92 — 101.

Мотив поглощения землей грешной семьи в чувашском фольклоре // Межнациональные и межконфессиональные отношения в регионах России: материалы Всероссийской научно-практической конференции. Йошкар-Ола, 2025. С. 147 — 155.